**МИНИСТЕРСТВО ПРОСВЕЩЕНИЯ РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ**

**Министерство образования и молодежной политики Чувашской Республики**

**Управление образования, спорта и молодежной политики администрации Чебоксарского муниципального округа**

**МБОУ "Янышская СОШ"**

| РАССМОТРЕНО | СОГЛАСОВАНО | УТВЕРЖДЕНО |
|---|---|---|
| Руководитель ШМО<br>________________________<br>Васильева М.В.<br>приказ №111 от «31» августа 2023 г. | Заместитель директора по УВР<br>________________________<br>Андриянова И.В.<br>приказ №111 от «31» августа 2023 г. | Директор школы<br>________________________<br>Васильева И.Б.<br>приказ №111 от «31» августа 2023 г. |

# РАБОЧАЯ ПРОГРАММА

**учебного предмета «Литература вулавĕ»**

для обучающихся 1 класса

Составила: учитель начальных классов
Яковлева Светлана Геннадьевна

**д.Яныши 2023**

**1. Планируемые результаты освоения учащимися основной образовательной программы**

Планируемые результаты освоения основной образовательной программы начального общего образования (далее — планируемые результаты) являются одним из важнейших механизмов реализации требований ФГОС НОО к результатам учащихся, освоивших основную образовательную программу. Они представляют собой систему **обобщенных личностно ориентированных целей образования**, допускающих дальнейшее уточнение и конкретизацию, что обеспечивает определениеи выявление всех составляющих планируемых результатов, подлежащих формированию и оценке.

Планируемые результаты:

– обеспечивают связь между требованиями ФГОС НОО, образовательной деятельностью и системой оценки результатов освоения основной образовательной программы начального общего образования, уточняя и конкретизируя общее понимание личностных, метапредметных и предметных результатов для каждой учебной программы с учетом ведущих целевых установок их освоения, возрастной специфики учащихся и требований, предъявляемых системой оценки;

– являются содержательной и критериальной основой для разработки программ учебных предметов, курсов, учебнометодической литературы, а также для системы оценки качества освоения учащимися основной образовательной программы начального общего образования.

В соответствии с системнодеятельностным подходом содержание планируемых результатов описывает и характеризует обобщенные способы действий с учебным материалом, позволяющие учащимся успешно решать учебные и учебнопрактические задачи, в том числе задачи, направленные на отработку теоретических моделей и понятий, и задачи, по возможности максимально приближенные к реальным жизненным ситуациям.

Иными словами, система планируемых результатов дает представление о том, какими именно действиями – познавательными, личностными, регулятивными, коммуникативными, преломленными через специфику содержания того или иного предмета – овладеют учащиеся в ходе образовательной деятельности. В системе планируемых результатов особо выделяется учебный материал, имеющий опорный характер, т. е. служащий основой для последующего обучения.

**Структура планируемых результатов** учитывает необходимость:

– определения динамики развития учащихся на основе выделения достигнутого уровня развития и ближайшей перспективы — зоны ближайшего развития ребенка;

– определения возможностей овладения учащимися учебными действиями на уровне, соответствующем зоне ближайшего развития, в отношении знаний, расширяющих и углубляющих систему опорных знаний, а также знанийи умений, являющихся подготовительными для данного предмета;

– выделения основных направлений оценочной деятельности — оценки результатов деятельности систем образования различного уровня, педагогов, учащихся.

С этой целью в структуре планируемых результатов по каждой учебной программе (предметной, междисциплинарной) выделяются следующие уровни описания.

Ведущие целевые установки и основные ожидаемые результаты изучения данной учебной программы. Их включение в структуру планируемых результатов призвано дать ответ на вопрос о смысле изучения данного предмета, его вкладе в развитие личности учащихся. Планируемые результаты представлены в первом, общецелевом блоке, предваряющем планируемые результаты по отдельным разделам учебной программы. Этот блок результатов описывает основной, сущностный вклад данной программы в развитие личности учащихся, в развитие их способностей; отражает такие общие цели образования, как формирование ценностных и мировоззренческих установок, развитие интереса, формирование определенных познавательных потребностей учащихся. Оценка достижения этих целей ведется в ходе процедур, допускающих предоставление и использование исключительно неперсонифицированной информации, а полученные результаты характеризуют деятельность системы образования.

Планируемые предметные результаты, приводятся в двух блоках к каждому разделу учебной программы. Они ориентируют в том, какой уровень освоения опорного учебного материала ожидается от выпускников.

Первый блок **«Выпускник научится».** Критериями отбора данных результатов служат: их значимость для решения основных задач образования на данном уровне, необходимость для последующего обучения, а также потенциальная возможность их достижения большинством учащихся, как минимум, на уровне, характеризующем исполнительскую компетентность обучающихся. Иными словами, в эту группу включается такая система знанийи учебных действий, которая, вопервых, принципиально необходима для успешного обучения в начальной и основной школе и, во-вторых, при наличии специальной целенаправленной работы учителя может быть освоена подавляющим большинством детей.

Достижение планируемых результатов этой группы выносится на итоговую оценку, которая может осуществляться как в ходе освоения данной программы посредством накопительной системы оценки (например, портфеля достижений),таки по итогам ее освоения (с помощью итоговой работы). Оценка освоения опорного материала на уровне, характеризующем исполнительскую компетентность учащихся, ведется с помощью заданий базового уровня, а на уровне действий, соответствующих зоне ближайшего развития, —с помощью заданий повышенного уровня. Успешное выполнение учащимися заданий базового уровня служит единственным основанием для положительного решения вопроса о возможности перехода на следующий уровень обучения.

Цели, характеризующие систему учебных действий в отношении знаний, умений, навыков, расширяющих и углубляющих опорную систему или выступающих как пропедевтика для дальнейшего изучения данного предмета.Планируемые результаты, описывающие указанную группу целей, приводятся в блоках **«Выпускник получит возможность научиться»** к каждому разделу примерной программы учебного предмета и выделяются

курсивом. Уровень достижений, соответствующий планируемым результатам этой группы, могут продемонстрировать только отдельные учащиеся, имеющие более высокий уровень мотивации и способностей. В повседневной практике обучения эта группа целей неотрабатывается со всеми без исключения учащимися как в силу повышенной сложности учебных действий для учащихся, так и в силу повышенной сложности учебного материала и/или его пропедевтического характера на данном уровне обучения. Оценка достижения этих целей ведется преимущественно в ходе процедур, допускающих предоставление и использование исключительно неперсонифицированной информации. Частично задания, ориентированные на оценку достижения этой группы планируемых результатов, могут включаться в материалы итогового контроля.

Основные цели такого включения — предоставить возможность учащимся продемонстрировать овладение более высокими (по сравнению с базовым) уровнями достиженийи выявить динамику роста численности группы наиболее подготовленных учащихся. При этом невыполнение учащимися заданий, с помощью которых ведется оценка достижения планируемых результатов этой группы, не является препятствием для перехода на следующий уровень обучения. В ряде случаев учет достижения планируемых результатов этой группы целесообразно вести в ходе текущего и промежуточного оценивания, а полученные результаты фиксировать посредством накопительной системы оценки (например, в форме портфеля достижений) и учитывать при определении итоговой оценки.

Подобная структура представления планируемых результатов подчеркивает тот факт, что при организации образовательной деятельности, направленной на реализацию и достижение планируемых результатов, от учителя требуется использование таких педагогических технологий, которые основаны на **дифференциации требований** к подготовке учащихся.

При получении начального общего образования устанавливаются планируемые результаты освоения:

– междисциплинарной программы «Формирование универсальных учебных действий», а также ее разделов «Чтение. Работа с текстом» и «Формирование ИКТкомпетентности учащихся»;

– программ по всем учебным предметам.

В данном разделе примерной основной образовательной программы приводятся планируемые результаты освоения всехобязательных учебных предметов при получении начального общего образования

Планируемые предметные результаты освоения чувашского языка и литературного чтения на чувашском языке разработаны в соответствии с содержанием и особенностями изучения этих курсов учебно-методическими объединениями Чувашской Республики.

## Формирование универсальных учебных действий

(личностные и метапредметные результаты)

В результате изучения **всех без исключения предметов** при получении начального общего образования у выпускников будут сформированы личностные, регулятивные, познавательные и коммуникативные универсальные учебные действия как основа умения учиться.

**Личностные результаты**

**У выпускника будут сформированы:**

– внутренняя позиция школьника на уровне положительного отношения к школе, ориентации на содержательные моменты школьной действительности и принятия образца «хорошего ученика»;

– широкая мотивационная основа учебной деятельности, включающая социальные, учебнопознавательные и внешние мотивы;

– учебнопознавательный интерес к новому учебному материалу и способам решения новой задачи;

– ориентация на понимание причин успеха в учебной деятельности, в том числе на самоанализ и самоконтроль результата, на анализ соответствия результатов требованиям конкретной задачи, на понимание оценок учителей, товарищей, родителей и других людей;

– способность к оценке своей учебной деятельности;

– основы гражданской идентичности, своей этнической принадлежности в форме осознания «Я» как члена семьи, представителя народа, гражданина России, чувства сопричастности и гордости за свою Родину, народ и историю, осознание ответственности человека за общее благополучие;

– ориентация в нравственном содержании и смысле как собственных поступков, так и поступков окружающих людей;

– знание основных моральных норм и ориентация на их выполнение;

– развитие этических чувств — стыда, вины, совести как регуляторов морального поведения; понимание чувств других людей и сопереживание им;

– установка на здоровый образ жизни;

– основы экологической культуры: принятие ценности природного мира, готовность следовать в своей деятельности нормам природоохранного, нерасточительного, здоровьесберегающего поведения;

– чувство прекрасного и эстетические чувства на основе знакомства с мировой и отечественной художественной культурой.

**Выпускник получит возможность для формирования:**

– *внутренней позиции учащегося на уровне положительного отношения к образовательной организации, понимания необходимости учения, выраженного в преобладании учебнопознавательных мотивов и предпочтении социального способа оценки знаний;*

– *выраженной устойчивой учебнопознавательной мотивации учения;*

– *устойчивого учебнопознавательного интереса к новымобщим способам решения задач;*

– *адекватного понимания причин успешности/неуспешности учебной деятельности;*

– *положительной адекватной дифференцированной самооценки на основе критерия успешности реализации социальной роли «хорошего ученика»;*
– *компетентности в реализации основ гражданской идентичности в поступках и деятельности;*
– *морального сознания на конвенциональном уровне, способности к решению моральных дилемм на основе учета позиций партнеров в общении, ориентации на их мотивы и чувства, устойчивое следование в поведении моральным нормам и этическим требованиям;*
– *установки на здоровый образ жизни и реализации ее в реальном поведении и поступках;*
– *осознанных устойчивых эстетических предпочтений и ориентации на искусство как значимую сферу человеческой жизни;*
– *эмпатии как осознанного понимания чувств других людей и сопереживания им, выражающихся в поступках, направленных на помощь другим и обеспечение их благополучия.*

**Метапредметные.**
**Регулятивные универсальные учебные действия**
**Выпускник научится:**
– учитывать выделенные учителем ориентиры действия в новом учебном материале в сотрудничестве с учителем;
– учитывать установленные правила в планировании и контроле способа решения;
– адекватно воспринимать предложения и оценку учителей, товарищей, родителей и других людей;
– различать способ и результат действия;
**Выпускник получит возможность научиться:**
– *в сотрудничестве с учителем ставить новые учебные задачи;*
– *преобразовывать практическую задачу в познавательную;*
– *проявлять познавательную инициативу в учебном сотрудничестве;*
– *самостоятельно учитывать выделенные учителем ориентиры действия в новом учебном материале;*
– *самостоятельно оценивать правильность выполнения действия и вносить необходимые коррективы в исполнение как по ходу его реализации, так и в конце действия.*
**Познавательные универсальные учебные действия**
**Выпускник научится:**
– осуществлять поиск необходимой информации для выполнения учебных заданий с использованием учебной литературы, энциклопедий, справочников (включая электронные, цифровые);
– осуществлять запись (фиксацию) выборочной информации об окружающем мире и о себе самом, в том числе с помощью инструментов ИКТ;
– строить сообщения в устной и письменной форме;
– основам смыслового восприятия художественных и познавательных текстов, выделять существенную информацию из сообщений разных видов (в первую очередь текстов);
**Выпускник получит возможность научиться:**
– *осуществлять расширенный поиск информации с использованием ресурсов библиотек и сети Интернет;*
– *осознанно и произвольно строить сообщения в устной и письменной форме;*
– *строить логическое рассуждение, включающее установление причинноследственных связей;*
**Коммуникативные универсальные учебные действия**
**Выпускник научится:**
– допускать возможность существования у людей различных точек зрения, в том числе не совпадающих с его собственной, и ориентироваться на позицию партнера в общении и взаимодействии;
– учитывать разные мнения и стремиться к координации различных позиций в сотрудничестве;
– формулировать собственное мнение и позицию;
– договариваться и приходить к общему решению в совместной деятельности, в том числе в ситуации столкновения интересов;
– задавать вопросы;
– использовать речь для регуляции своего действия;
– адекватно использовать речевые средства для решения различных коммуникативных задач, строить монологическое высказывание, владеть диалогической формой речи.

**Выпускник получит возможность научиться:**
– *учитывать и координировать в сотрудничестве позиции других людей, отличные от собственной;*
– *учитывать разные мнения и интересы и обосновывать собственную позицию;*
– *понимать относительность мнений и подходов к решению проблемы;*
– *аргументировать свою позицию и координировать ее с позициями партнеров в сотрудничестве при выработке общего решения в совместной деятельности;*
– *продуктивно содействовать разрешению конфликтов на основе учета интересов и позиций всех участников;*
– *задавать вопросы, необходимые для организации собственной деятельности и сотрудничества с партнером;*
– *осуществлять взаимный контроль и оказывать в сотрудничестве необходимую взаимопомощь;*

– *адекватно использовать речевые средства для эффективного решения разнообразных коммуникативных задач, планирования и регуляции своей деятельности.*

**Предметные результаты. Литература вулавĕ. Класс тулашĕнчи вулав**

**Ачасенчен 1 класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результатсем**
**Предметăн пайрам результачĕсем:**
- ачасен хăйсен ӳсĕмне тивĕçтерекен литература хайлавĕсене итлес-вулас кăмăлĕ амаланни;
- литература жанрĕсем çинчен пĕтĕмĕшле ăнланăвĕ калăпланма пуçлани;
- ача хăй те хайлав ĕçне явăçма сĕмленни.
- текст ячĕ тăрăх текст содержанине тавçăрни;
- текст мĕн çинчен пулнине калама пултарни;
- текст содержани тăрăх ӳкерейни, сăмахлă ӳкерчĕк тăвайни;
- текста малалла тăсайни;
- хатĕр планпа усă курса текст содержанине калама пĕлни;

**К концу 1 класса обучающийся научится:**
**Вĕренекен 1 класран вĕренсе тухнă тĕле вĕренсе çитет:**
- калăпăшĕпе пысăках мар, ансат сюжетпа интригăллă, ансат жанрлă илемлĕ хайлавсене тăнласа е вуласа ăнланма;
**получит возможность научиться:**
**вĕренсе çитме пултарать:**
- илемлĕ хайлав çинчен пĕтĕмĕшле ăнланни. Проза тата поэзии хайлавĕсен хăй евĕрлĕхне туйма;
- илемлĕ хайлавпа ĕçлемелли пуçламăш хăнăхусем калăпланни, хайлавсен содержанине ăса хывмалли тата асăмламалли мелсене вĕренсе пыма;

**Ачасенчен 2 класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результатсем**
**Предметăн пайрам результачĕсем:**
- вулав пахалăхĕсем çирĕпленни, вулав тĕсĕсемпе мелĕсене алла илсе пыни;
- сасăллă пуплевĕн пĕлтерĕшлĕ мелĕсене (хăвăртлăхĕ, янăравлăхĕ, кĕвĕлĕхĕ) кирлĕ пек улăштарма вĕренни;
- текст тишкерĕвне малалла вĕренсе пыни;
- ансат жанрсене (юмах, калав, сава) пĕр-пĕринчен уйарса илме пултарни;
- хаш-пĕр илемлĕх мелĕсене (танлаштару, эпитет, метафора) курма-санама тытанни;
- литература пĕлĕвĕн ансат анлавĕсемпе паллашни.

**К концу 2 класса обучающийся научится:**
**Вĕренекен 2 класран вĕренсе тухнă тĕле вĕренсе çитет:**
- ансат жанрсене (юмах, калав, сăвă) пĕр-пĕринчен уйăрса илме;
- текст мĕн çинчен пулнине калама, текста малалла тăсма;
- текст содержани тăрăх ӳкерчĕк тума;

**получит возможность научиться:**
**вĕренсе çитме пултарать:**
-текст тишкерĕвне малалла тума вĕренме;
- хăш-пĕр илемлĕх мелĕсене ( танлаштару, эпитет, метафора) курма-сăнама тытăнма;
- литература пĕлĕвĕн ансат ăнлавĕсемпе паллашма.

**Ачасенчен 3 класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результатсем**
**Предметăн пайрам результачĕсем:**
- текстпа ĕçлеме пултарни: темипе тĕп шухăшне палартни, тишкерӳ ыйтăвĕпе çыхăннă информаци тупни;
- пĕтĕмлетӳсем патне пыма, пулăмсемпе сăнарсен хăтланăшĕсен çыхăнăвĕсене ăнланма, сăлтавлама вĕренсе пыни;
- текстра геройсен шухăшне çирĕплетекен вырăнсене тупма пултарни.
- сăнарсен ĕçĕ-хĕлĕпе хăтланăшĕсене, кăмăл-туйăмне тишкернĕ-сăнанă май пĕтĕм этемлĕх ырлăхĕсемпе пахалăхĕсене ăша хывас, ырăпа усала уяс хăнăхусем аталанса пыни;
- илемлĕ текстпа ансат ăслăлăх тексчĕсен уйрăмлăхĕсене палăртма пĕлни;
- героя, унăн хăтланăвĕ тата текстра тӳррĕн панă характеристики тăрăх хак пама, геройсене хак пани тăрăх автор вĕсем çине мĕнле куçпа пăхнине чухлама пĕлни;
- литература хайлавĕ çинчен ансат каласа пама (вăл халăхăн е авторăн хайлавĕ, унăн тĕсĕ (проза, поэзи, драма), жанрĕ (юмах, повесть-юмах, калав, былина, миф, халап, сăвă, пьеса), сюжетри тĕп йĕрсем, хайлавăн тĕп шухăшĕ) пĕлни;
**К концу 3 класса обучающийся научится:**

**Вĕренекен 3 класран вĕренсе тухнӑ тĕле вĕренсе ҫитет:**
- текстра геройсен шухӑшне ҫирĕплетекен вырӑнсене тупма;
- илемлĕ литература жанрĕсен ( тĕрлĕ юмах, калав, сӑвӑ, юптару) тĕп уйрӑмлӑхĕсене курма.
**получит возможность научиться:**
**вĕренсе ҫитме пултарать:**
- текспа ĕҫлеме пултарни: темӑпа тĕп шухӑша палӑртма, тишкерӳ ыйтӑвĕпе ҫыхӑннӑ информаци тупма;
- пĕтĕмлетӳсем патне пыма, пулӑмсемпе сӑнарсен хӑтланӑшĕсен ҫыхӑнӑвĕсене ӑнланма, сӑлтавлама вĕренме;
- текстра илемлĕ сӑнарлӑх мелĕсене (танлаштару, сӑпатлантару, эпитет, тепĕр хут калани, рифма, сасӑ ҫырӑвĕ) тупма;

__**Ачасенчен 4 класран вĕренсе тухнӑ тĕле кĕтекен результатсем**__
**Предметӑн пайрам результачĕсем:**
- фольклор хайлавне автор хайлавĕнчен уйӑрса илме, проза жанрĕсене ( юмах, калав, повесть) уйӑрма, тĕп паллисене палӑртма пĕлни;
- хайлав ӑшлӑхне пĕр тĕвĕре (завязка – ĕҫ аталанӑвĕ – кульминации – развязка; ĕҫ пуҫламӑшĕ – ĕҫ аталанӑвĕ – чи хĕрӳллĕ самант – ĕҫ вĕҫĕ ) курма пултарни;

**К концу 4 класса обучающийся научится:**
**Вĕренекен 4 класран вĕренсе тухнӑ тĕле вĕренсе ҫитет:**
- героя, унӑн хӑтланӑвĕ тата текстра тӳррĕн панӑ характеристики тӑрӑх хак пама, геройсене хак пани тӑрӑх автор вĕсем ҫине мĕнле куҫпа пӑхнине чухлама;
- литература хайлавĕ ҫинчен ансат каласа пама (жанрĕ (юмах, повесть-юмах, калав, былина, миф, халап, сӑвӑ, пьеса), хайлавӑн тĕп шухӑшĕ) пĕлме;
**получит возможность научиться:**
**вĕренсе ҫитме пултарать:**
- текстра илемлĕ сӑнарлӑх мелĕсене (танлаштару, сӑпатлантару, эпитет, тепĕр хут калани, рифма, сасӑ ҫырӑвĕ) тупма;
- илемлĕ текстпа ансат ӑслӑлӑх тексчĕсен уйрӑмлӑхĕсене палӑртма;
- литература хайлавĕ ҫинчен ансат каласа пама (вӑл халӑхӑн е авторӑн хайлавĕ, унӑн тĕсĕ (проза, поэзи, драма), сюжетри тĕп йĕрсем) пĕлме;
- авторпа, унӑн пултарулӑхĕпе кĕскен паллаштарма (писатель, поэт); пирĕн вӑхӑтри е маларахри саманасенче пурӑннӑ; мĕн ҫинчен ҫырать е ҫырнӑ);
- авторӑн тата харпӑр хӑйĕн кӑмӑлне палӑртса литература хайлавĕн персонажĕсене хак пама.

## 2. __Содержание учебного предмета. Предметӑн шалашĕ.__

__1 класс.__ **Литература вулавĕ. Класс тулашĕнчи вулав (33 сех)**
Пĕрремĕш класӑн 1-мĕш ҫур ҫулĕнче ачасен вулав хӑнӑхӑвĕсем йĕркеленсе ҫитеймен пирки литература итлевĕсем пулаҫҫĕ. Литература итлевĕн тĕп тĕллевĕсем тесе ҫаксене палӑртатпӑр:
ачасене литература хайлавĕсемпе кӑсӑклантарса ярасси, илемлĕ хайлавсене итлесе ӑнланма, ӑса хывма вĕрентсе пырасси;
- ачасенче ырӑпа усала, хурапа шурра туяс туйӑма, илем сисĕмне амалантарса ярасси, тĕнче курӑмне анлӑлатасси;
- ачасен ӑнлав пултарулӑхне амалантарасси.
Вĕрентӳ задачисемпе пулас результачĕсене, йĕркелеме палӑртнӑ компетенцисене шута илсе ĕҫе 4 тапхӑра пайлама пулать:
**1- мĕш тапхӑр.** Илемлĕ хайлав ҫинчен пĕтĕмĕшле ӑнланасси. Проза тата поэзи хайлавĕсем. Вĕсене итлеме-тӑнлама, йышӑнма вĕренсе пырасси.
**2- мĕш тапхар.** Халӑх сӑмахлӑхĕ. Вак жанрсем. Юмахсем. Халӑх сӑмахлӑхĕн хайлавĕсем сӑмах вĕҫҫĕн ҫӳренине, вĕсен авторĕ ҫуккине ӑнланасси. Вак жанрсемпе паллашасси: вĕсен тĕслĕхĕсене итлесси. Тупмалли юмахсемпе пулмасла халапсем хайласси.
**3-мĕш тапхар.** Литература хайлавĕ. Унӑн ячĕ. Шӳтлĕ хайлавсем. Вĕсене калас уйрӑмлӑхсем (интонаци, сасӑ вӑйĕпе ҫӳллĕшĕ, пуплев хӑвӑртлӑхĕ, пит-куҫпа кӳлепе хусканӑвĕсем). Шӳте ӑнланма вĕренсе пырасси.
**4-мĕш тапхар.** Литература жанрĕсем (калав тата сӑвӑ), вĕсене уйӑрма, вĕсен уйрӑмлӑхĕсене ӑнкарма, тĕслĕхĕсене итлеме-тӑнлама, йышӑнма вĕренсе пырасси.
**2-мĕш ҫур ҫулта** ачасем пуҫламӑш вулав хӑнӑхӑвĕсем туянса ҫитереҫҫĕ, вĕсен итлев хӑнӑхӑвĕсем калӑпланнӑ теме пулать.
Литература вулавĕ темиҫе тĕллеве пĕрлĕхлĕн пурнӑҫа кĕртме май панине (вулама, текстпа ĕҫлеме тата литература хайлавне ӑнланма, тишкерме вĕрентесси; кĕнекене юратма, унпа ĕҫлеме, харпӑр хӑй тĕллĕн вулама хӑнӑхтарасси) шута илсе уроксен пайрам тата харкам тĕллевĕсем анлӑланаҫҫĕ. Ҫапах та вĕсем пĕрремĕш ҫур ҫултисенчен пачах, принциплӑ уйрӑлса тӑмаҫҫĕ. Вĕсем ҫинче никĕсленсе вĕсен анлӑрах та тарӑнрах тӑсӑмĕ пулаҫҫĕ.
Иккĕмĕш ҫур ҫулти уроксене, вĕсен тĕллевĕсемпе задачисене, йĕркелемелли ӑслай-ӑнланусене (компетенцисене) шута илсе, тĕпрен илсен 2 тапхӑра уйӑрма пулать.
**1 - мĕш тапхар. Халах самахлахĕ.**
Иккĕмĕш ҫур ҫулта ачасен халӑх сӑмахлӑхне вĕренесси самай анлӑрах пулмалла; жанр тĕлĕшĕнчен те, пĕлу-ӑслай тĕлĕшĕнчен те.

Ку ҫур ҫулта вӗсем пӗр енчен вулав техника хӑнӑхӑвӗсемпе ачасен ҫыхӑнуллӑ пуплевне аталантарассипе тата текстпа ӗҫлеме вӗрентессипе, тепӗр енчен илемлӗ литературӑпа паллаштарассипе, илемлӗ хайлавсене вуламаӑнланма, тишкерме вӗрентессипе ҫыхӑннӑ.

**2 - мӗш тапхар. Литература тӗсӗсем (жанрӗсем) (калав, сӑвӑ, юптару)** ҫинчен туянна пӗтӗмӗшле ӑнлавсене чухлани тарӑнланни; тӗрлӗ жанрлӑ литература хайлавӗсене тишкерес мехел аталанни; текстра ҫырса кӑтартнӑ пулӑмсене, вӗсен сӑлтавӗсене тишкерме вӗренсе пыни; хайлавсене вуланӑ, тишкернӗ май ансат сӑнарлӑх хатӗрӗсене (эпитет, сӑпатлантару, темиҫе хут калани, метафора) курма хӑнӑхса пыни.

**<u>2 класс.</u> Литература вулавӗ. Класс тулашӗнчи вулав (68 сех)**

**Литература вулавӗ**

**Вулав карти. Мӗн-ши вӑл Тӑван ҫӗр-шыв?** Савнӑ ҫӗр, Чӑваш ҫӗр-шывӗ. Пирӗн ҫӗр-шыври хуласемпе ялсем. Тӑван республика ҫыннисен ӗҫӗ-хӗлӗ. «Пирӗн ял (хула)» экскурси.

**Кӗркунне.** Кӗрӗн тӗрлӗ тапхӑрне (пуҫламӑшӗ, ылтӑн кӗркунне, хура кӗркунне), чӗр чунсемпе ӳсен-тӑрансен пурнӑҫӗнчи улшӑнусене сӑнлакан калавсемпе сӑвӑсем. «Кӗрхи сӑнсем» экскурси.

**Эпир - туслӑ ачасем.** Ачасен пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗ, вӗсем туслӑ пулни, пӗр-пӗрне пулӑшни.

**Ӗҫ телей те савӑнӑҫ кӳрет.** Ӗҫ ҫинчен, тӗрлӗ професси ҫинчен, ӗҫӗн пурнӑҫри пӗлтерӗшӗ, халӑх пурлӑхӗшӗн тӑрӑшни, ӗҫ ҫынна телей кӳни ҫинчен ҫырнӑ калавсемпе сӑвӑсем.

**Хӗлле.** Хӗллехи ҫанталӑк. Чӗр чунсемпе ӳсен-тӑрансен хӗллехи пурнӑҫӗ. Ҫӗнӗ ҫула кӗтсе илни. «Хӗл ҫитсен» экскурси.

**Чӗр чунсем - пирӗн туссем.** Чӗр чунсем ҫинчен ҫырнӑ калавсем, сӑвӑсем, ваттисен сӑмахӗсемпе туптарусем (тупмалли юмахсем). Чӗр чунсене хутӗлесси, вӗсене пулӑшасси.

**Халӑх сӑмахлӑхӗ.** Чӑваш тата ытти халӑхсен юмахӗсем, юррисем, ваттисен сӑмахӗсемпе туптарусем.

**Тӑван кил-йышра.** Пирӗн несӗлсем. Аннесемпе асаннесем, кукамайсемпе аппасем, вӗсен ӗҫӗ-хӗлӗ. Аннесем ҫинчен ҫырнӑ калавсемпе сӑвӑсем.

**Килчӗ ырӑ ҫуркунне.** Чӗр чунсемпе ӳсен-тӑрансен пурнӑҫӗнчи улшӑнусем. Пӑр кайни. Ачасен вӑййи-кулли. Аслисен ҫурхи ӗҫӗсем. Космонавтика кунӗ. Космонавтсем ҫинчен.

**Ҫу уйӑхне кӗтӗмӗр**. Ҫуллахи ҫут ҫанталӑк, уй-хирти тата пахчари ӗҫсем ҫинчен ҫырнӑ калавсемпе сӑвӑсем, тӗрленчӗксем.

**Ӳсен-тӑран тӗнчи.** Вӑрман пурнӑҫӗ, ӳсен-тӑран ҫинчен ҫырнӑ сӑвӑ-юра, калавсемпе халапсем.

**Пӑхмасӑр калама вӗренмелли сӑвӑсем:** ҫут ҫанталӑк, тӑван ен, тус-тӑванлӑх, тӗрлӗ чӗр чун ҫинчен калакан 5-6 сӑвӑ (вӗрентӳҫӗ сӗннисем тата ачасем хайсем кӑмӑлласа суйланисем).

**Вулав хӑнӑхӑвӗсем.** Тӗрӗс, ӑнланса, пӗр тикӗссӗн, сӑмахсене вакламасӑр (кӑткӑс тытӑмлӑ сӑмахсене - сыпӑкласа) вуласси. ***<u>Вулав хаӑйртлӑхӗ - минутра 50 сӑмахран кая мар</u>*** (ӑшра вуланӑ чухне сӑмах шучӗ 60 таран ӳсмелле). Вуланӑ чух шухӑша пӑсмасӑр, тӗрӗс чарӑнусем туса сывлӑш ҫавӑрса ярасси. Хутсӑр предложенин пур тӗсӗсене те тӗрӗс интонаципе вуласси. Шухӑшпа тӗллеве кура текста хӑвӑрт е хуллен, сасса хӑпартса е хӑпартмасӑр вуласси.

**Текстпа ӗҫлесси. Ҫыхӑнуллӑ пуплеве аталантарасси.** Вуланӑ текст тӑрӑх ыйтусене хуравласси, каланине текстри предложенисемпе ҫирӗплетесси. Текста пахаласси, ӑна вӗрентӳҫӗ ыйтӑвӗсем е кӗнекери ӳкерчӗклӗ план тӑрах аса илсе каласси.

Вуланӑ текст тӑрах сӑмахлӑ ӳкерчӗксем тӑвасси. Пысӑках мар калав шалашне (содержанине) пӑтраштармасӑр, йӗркипе аса илесси.

Кӗнекери ӳкерчӗксем мӗне сӑнланине, вӗсем калавӑн хӑш пайне кӑтартнине палартасси, ҫав вырӑна текстра тупасси. Калава темиҫе пая уйӑрасси, вӗсене ят парасси; вуланӑ текстӑн тӗп шухӑшне палӑртасси (вӗрентӳҫӗ пулӑшнипе). Илемлӗх мелӗсене - танлаштарусене, эпитетсене, метафорӑсене (терминсене асӑнмасӑр) - сӑнасси.

Ҫывах пӗлтерӗшлӗ сӑмахсене танлаштарасси, ун пек самахсене вӗрентӳҫӗ пулӑшнипе тупасси. Нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсене тӗрӗс ӑнланасси. Вӗрентӳҫӗ пулӑшнипе текстра тӗрлӗ пулӑма, ҫынна, ҫут ҫанталӑка сӑнарлӑн кӑтартакан сӑмахсене тупасси, вӗсемпе сӑмахлӑ ӳкерчӗксем тунӑ чух усӑ курасси, тавралӑха санасси, тантӑшсемпе выляни ҫинчен пӗчӗк калав хайласси.

Юмаха, калава, сӑвва пӗр-пӗринчен уйарса илме пӗлесси.

Сасӑллӑ пуплевӗн (калаҫӑвӑн) пысӑк пӗлтерӗшлӗ мелӗсене - хӑвӑртлӑха, янӑравлӑха, сасӑ хулӑнӑш-ҫинҫӗшне, кӗвӗлӗхне кирлӗ пек улаштарма вӗренесси. Сӑмахсене тӗрӗс каласси.

**Вулав кӗнекипе ӗҫлеме хӑнӑхтарасси.** Тупмаллипе паллаштарасси, кирлӗ калав е сӑвӑ ятне шыраса тупма вӗрентесси. Хайлав хыҫҫӑнхи ыйтусемпе ӗҫсене пурнӑҫласси (вӗрентӳҫӗ пулӑшнипе).

**КЛАСС ТУЛАШӖНЧИ ВУЛАВ**

**Вулав материалӗ.** Ача-пӑча валли кӑларна 8-30 страницӑллӑ кӗнекесем. Ачасем хӑйсем тӗллӗн ӑшра тата тепӗр хут саспа суйласа вуламалли сӑвӑсем, юмахсем, калавсем (калӑпӑшӗ - 5 страница таран).

**Вулав тематики.** Чӑваш ҫӗр-шывӗ, ачасен пурнӑҫӗпе ӗҫӗсем, чӗр чунсемпе ӳсен-тӑран ҫинчен. Тем те пӗр курса ҫӳрени. Юмахсем.

**Ача-пӑча кӗнекипе ӗҫлесси.** Кӗнекен тӗп пайӗсене, вӗсен ячӗсене (хуплашка, страницӑсем, тупмалли) пӗлесси. Кӗнекене мӗн ҫинченнине ячӗпе авторӗ, ӳкерчӗкӗсем тӑрӑх ӑнкарасси (I ҫур сул); мӗн е кам ҫинчен итленине, вуланине ыйтсан тӗрӗс хуравласси.

4-5 кӗнекене темине кура ушкӑнласа уйӑрасси; вулав темине палӑртасси, кӗнекене унӑн хӑйне евӗр паллисем тӑрӑх суйласа илесси. I ҫур ҫулта - итленӗ текста, II ҫур ҫулта - харпӑр хӑй тӗллӗн вуланине аса илсе ыйтусем тӑрӑх каласа парасси. Тӗрлӗ пулӑма, сӑнарсен ӗҫӗ-хӗлӗпе хӑтланкалӑшӗсене тӗрӗс хак парасси. Кӗнеке куравӗпе, сӗну плакачӗпе (I ҫур ҫул), хуплашкасен картотекипе тата ансат каталог карточкипе (II ҫур ҫул) паллаштарасси.

I— II класра тăтăшах курнă ача-пăча кĕнекисен авторĕсене тĕрĕс аса илесси.
Ачасен харпăр хăй тĕллĕн кĕнеке вулас кăмăл туртăмне вăйлатасси; класри вулавçă кĕтесне тирпейлесе тăма хăнăхтарасси, ун çине таянса тĕрлĕрен литература вăйййипе паллаштарасси. Вуланă хайлавсен уйрăм пайĕсене куç кĕрет выляса кăтартасси.

**<u>3 класс.</u> Литература вулавĕ. Класс тулашĕнчи вулав (68 сех)**

**Литература вулавĕ**

**Вулав карти. Чăваш çĕр-шывĕ.** Чăваш ен илемĕ, юхан шывĕсемпе вăрманĕсем. Чăваш çыннисемпе ытти халăхсем хушшинчи туслăх, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнни.
**Кĕркунне.** Кĕрхи çут çанталак, çынсен ĕçĕ-хĕлĕ. «Кĕрхи çут çанталăк» экскурси.
**Тăван тавралăха, çут çанталăка упрани, илем кӳни - Тăван çĕр-шыва сыхлаииех.** Çынсем тăван тавралăха упрама, илем кӳме тăрăшнине, çак ĕçе ачасем те хутшăнма пултарнине сăнлакан калавсемпе сăвăсем.
**Эпир - сăпайла ачасем.** Ачасен пурнăçĕ, вĕсен туслăхĕ. Ачасем хăйсене сапăр та тирпейлĕ тытма тăрăшнине, аслисене хисепленине, сăпайла пулнине сăнлакан калавсем, сăвăсем, статьясем.
**Асамçă хĕл.** Хĕллехи çут çанталăк. Этем ĕçĕ-хĕлĕ. Чĕр чунсен пурнăçĕ. Хĕл илемĕ калавсенче, юмахсенче, ӳнерçĕсен укерчĕкĕсенче сăнланни. «Хĕллехи çут çанталăк» экскурси.
**Халăх пултарулăхĕ.** Юмахсем, юрăсем, ваттисен самахĕсемпе туптарусем (тупмалли юмахсем). Тĕрлĕ халăх юмахĕсем.
**Эпир Улăп йăхĕнчен.** Улăп халапĕсем тата ытти халăх халапĕсем.
**Çурхи хаваслăх.** Çут çанталăк чĕрĕлни. Чĕр чунсен пурнăçĕпе çынсен ĕçĕсем. Ачасен çурхи вăййисем. «Çурхи çут çанталак» экскурси.
**Чăваш халăхĕн паллă çыравçнсем.** К.Иванов, Н.Шелепи, Н.Илпек, М.Трубина, В.Харитонов, Н.Ижентей, Х.Уяр, Н.Карай сăввисемпе калавĕсем.
**Тăванла халăхсен çыравçнсем.** М.Джалиль, Г.Тукай, Р.Минатуллин сăввисемпе поэма сыпăкĕсем.
**Вырăссен чаплă çыравçнсем.** А.Пушкин, И.Крылов, Л.Толстой, Н.Некрасов хайлавĕсем. Вырăссен хальхи ача-пача литературин тĕслĕхĕсем: Н.Сладков, Н.Соколов-Микитов, Л.Ковалев хайлавĕсем.
Вĕрентӳçĕ е вĕренекен суйласа илнĕ 5-6 сăвва пăхмасăр вĕренмелле.
**Вулав хăнăхăвĕсем.** Тĕрĕс, ăнланса, пĕр тикĕссĕн, сăмахсене вакламасăр, вăтам хăвăртлăхпа вуласси. ***<u>Вулав хăвăртлăхĕ минутра 70 сăмахран кая мар пулмалла</u>*** (ăшра вуланă чухне сăмах шучĕ 80 таран ӳсмелле). Шухăш аталанăвне кăтартакан сăмахсене ансат мелсемпе уса курса палăртасси. Шухăшне тата тĕллевне кура текста тивĕçлĕ интонаципе (хăвăрт е хуллен, сасса хăпартса е хăпартмасăр, логика пусăмĕсемпе логика тăхтавĕсем туса) вуласси. Сасăпа вуланă чухне харкам вулава асăрхаса пырасси, йăнăш вырăнсене тепĕр хут тĕрĕс вуласа тӳрлетесси. Текстра пĕлтерĕшне уçăмлатмалли сăмахсене харкам тĕллĕнех палăртасси.
**Текстпа ĕçлесси. Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси.** Вуланă текстри ĕçсем мĕнле аталанса пынине йĕркипе аса илсе каласси (ансат план тăрăх). Панă ыйтăва хуравлама текстри кирлĕ вырăна тупасси. Текстăн шухăш тĕлĕшĕнчен вĕçленнĕ пайĕсене уйăрасси, вĕрентӳçĕ пулăшнипе текст ятне ăнлантарасси, унăн тĕп шухăшне палăртасси.
Ансат план ăсласси, план тăрăх текст ăшлăхне асамласа каласа парасси (туллин, кĕскен, суйлавлăн). Вуланине туллин тата суйлавлă каласа панă чух сăмахлă укерчĕксем тăвасси, сăнарлă сăмахсемпе, сăмах майлашăвĕсемпе, синонимсемпе вырăнлă уса курасси.
Сăнарсене, çут çанталăка сăнласа кăтартнă чух усă куракан сăмахсене, вĕсен майлашăвĕсене текстра тупасси. Сăмахан текстри пĕлтерĕшне ăнланасси. Сăнарсене вĕрентӳçĕ пулăшнипе хак парасси. Курни-илтни, сăнани çинчен çыхăнуллă калав тăвасси. Каланă шухăша вуласа тухнă текстри тĕслĕхпе çирĕплетесси. Инсценировкăсене хутшăнса роль сăмахĕсене тивĕçлĕ интонаципе вуласси.
**Илемлĕ литература жанрĕсен хăш-пĕр уйрăмлăхĕсем:** юмах (унта тĕлĕнмелле, чăн пурнăçра пулма пултарайман ĕçсем пулса иртеççĕ), юптару (сăнарĕсем - тĕрлĕ чĕр чун, йывăç-курăк; вĕçĕнче вĕрентсе калани пур), сăвă (йĕркисем хăйне евĕр виçеллĕ, йĕрке вĕçĕсем пĕр пекрех янăраççĕ).
**Вĕренӳ кĕнекине чухласси:** кирлĕ хайлава унăн тупмаллинчи ячĕ тăрăх тупасси; кĕнекене пĕр авторăн калавĕ е сăвви тĕлне уçасси; тема тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕрне çывăх хайлавсене асăрхасси; текст хыççăнхи ĕçсене харпăр хăй тĕллĕн ăнланса пурнăçласси.

**Класс тулашĕнчи вулав**

**Вулав материалĕ:** чăваш, вырăс, ытти тăванла халăхсен писателĕсем ачасем валли çырнă 15-20 кĕнеки, «Тантăш» хаçатпа «Тетте» журналти материалсем (вĕрентӳçĕ суйласа илнĕ тăрăх).
**Вулав тематики:** тăван тавралăх илемне сăнлакан, пурнăçа юратма, çут çанталăка упрама, сапăр та тараватлă пулма вĕрентекен, тĕрлĕ халăх ывалĕ-хĕрĕсен пархатарлă ĕç-хĕлне сăнлакан сăвăсемпе калавсем, пысăкрах калăплă хайлав сыпăкĕсем, юмахсем.
**Ача-пача кĕнекипе ĕçлесси** (пĕлӳсем, ăслайсемпе хăнăхусем). Кĕнеке пайĕсене пĕлесси: титул листа, ум сăмах, тупмалли, вĕçĕнче калани. Кĕнеке мĕн çинченнине унăн пайĕсем тăрăх ăнкарасси. Класс тулашĕнчи вулав урокĕ валли кирлĕ кĕнекене шыраса тупасси. Класс тулашĕнче I çур çулта эрнере вăтамран 10-12, II çур çул вĕçĕнче 20-25 страницăран кая мар вуласси, вуласа пĕлнине вĕрентӳçĕ ыйтăвĕсем тăрăх каласа парасси. Кĕнекен ятне, авторне аса илме пĕлесси. Паллашнă писателĕн 2-3 кĕнекине астăвасси. Сĕннĕ кĕнекесен списокĕпе, тема картотекипе усă курасси.
**Çĕнĕ литература вăййисем выляма вĕрентесси.** Вĕсене класс тулашĕнче те выляттарасси.

**4 класс. Литература вулавӗ. Класс тулашӗнчи вулав (34 сех)**

**Литература вулавӗ**

**Вулав карти.** Ку вăл ман Тăван çӗр-шыв. Чăваш халăхӗ. Чăваш чӗлхи. Тăван халăхăн аваллăхӗ, ун çинчен калакан ваттисен сăмахӗсем, калавсем, сăвăсем, статьясем, пысăкрах хайлав сыпăкӗсем.

**Кӗр çитрӗ.** Кӗрхи çут çанталăк. Çынсен ӗçӗ-хӗлӗ. Чӗр чунсен пурнăçӗ. Ӗç çыннисем çут çанталăка упрассишӗн тăрăшни, çак ӗçе ачасем те хутшăнни. «Тăван тавралăх» экскурси.

**Кусем - манăн туссем.** Ачасен пурнăçӗ, вӗсен юлташлăхӗпе туслăхӗ, ӗçченлӗхӗпе сăпайлăхӗ. Туслă тантăшсем тăван халăхăн ырă йăли-йӗркине асра тытни.

**Ырăпа усал.** Ултавпа суя, тӳрӗлӗх-чăнлăх, хӗрхенӳпе хытă чунлăх, чурăслăх, ӗçченлӗхпе наянлăх, каппайчăклăхпа сăпайлăх, тӳрккеслӗхпе ыр кăмăллăх çинчен калакан хайлавсем, юмахсем.

**Çуркунне çитсессӗн...** Çурхи вăхăта, пурнăç илемӗпе унăн асамлăхне сăнлакан, çак илеме упрама чӗнекен хайлавсем.

**Атте-анне пурри - телей те пуянлăх.** Çемье, кил-йыш, çывăх çынсем çинчен калакан хайлавсем.

**Çу пуçланчӗ.** Çуллахи çут çанталăк. Тавралăх.

**Чӗр чунсем - пирӗн туссем.** Ачасемпе чӗр чунсем хушшинчи хутшăну. Чӗр чунсене юратас, шеллес, хӳтӗлес туйăмсене çуратакан хайлавсем.

**Ӳсен-тăран тӗнчинче.** Вăрман-çаран, чечек-курăк çинчен калакан хайлавсем.

**Варçă кӗрленӗ чух.** Тăван çӗр-шывăн аслă вăрçин паттăрӗсем, тыл ӗçченӗсем, Аслă Çӗнтерӳ çинчен калакан хайлавсем.

**Халăх пултарулăхӗ.** Чăваш халăх сăмахлăхӗн тӗслӗхӗсем. Вӗсенче этем ăс-тăнӗн ырă енӗсем (ваттисене хисеплени, Тăван çӗр-шыва юратни, сăпайлăхпа ӗçченлӗхе ырлани, тӗрӗслӗхшӗн кӗрешни) палăрса тăни. Писательсем çырнă юмахсем, юптарусем, ытти халăхсен юмахӗсем, ваттисен сăмахӗсемпе туптарусем.

**Халăхăмăрăн сумлă çыравçисем.** Çеçпӗл Мишши, Митта Ваçлейӗ, П.Хусанкай, Я.Ухсай, Х.Уяр, А.Артемьев. Вӗсен уйрăм сăввисем, калавӗсем, пысăкрах хайлав сыпăкӗсем.

**Шурă юр çусассăн.** Хӗл вăхăтне сăнлакан хайлавсем. Вӗсенче тăван тавралăха, тăван çӗре юратни палăрни. Хӗл тата çур вăхăчӗ çинчен калакан туптарусем, ваттисен сăмахӗсем. Çӗнӗ çул тата Раштав уявӗсем.

**Вырăссен манăçми çыравçисем.** А.Пушкин, Н.Некрасов, С.Есенин, М.Пришвин, Н.Сладков, А.Куприн, В.Бианки çырнă хайлавсем.

Вӗрентӳçӗпе ачасем хăйсем суйланă 7-8 сăвă, юптару пăхмасăр калама вӗренмелле.

**Вулав хăнăхăвӗсем.** Литература чӗлхин виçисене пăхăнса, тулли сăмахсемпе, ăнланса вуласси. Ку усӗмшӗн юрахлă текста ăшра вуласа ăнланасси. ***<u>Вулав хăвăртлăхӗ минутра 90 сăмахран кая мар</u>*** (ăшра вуланă чухне сăмах шучӗ 110 таран ӳсмелле). Ăнланман сăмах пӗлтерӗшне пӗтӗмӗшле пуплев пӗлтерӗшӗ çине таянса чухласа илесси. Мӗн пур предложение (хутсăррисене те, хутлисене те) тӗрӗс интонаципе вуласси.

**Текстпа ӗçлесси.** Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси. Вуланă текстăн тӗп шухăшне харпăр хăй тӗллӗн палăртасси, унăн пайӗсем шухăш енӗпе мӗнле çыхăнса тăнине асăрхасси, текстăн планне тăвасси. Мӗн вуланине харпăр хăй тӗллӗн тунă планпа усă курса туллин, кӗскен, тата суйлавлăн аса илсе каласси. Пӗр-пӗр темăпа калав тумалли материала текстра тупса палăртасси.

Хайлаври ӗçсене тӗрӗс, йӗркипе аса илесси. Сăнлавлă (çут çанталăка, çынна, пӳрт-çурт таврашне сăнлани), уйлавлă элементсемпе диалог кӗртнӗ текста аса илсе каласси, тӳрӗ пуплеве тӳрӗ мар пуплевпе улăштарасси.

Сăнарсен пуплев уйрăмлăхӗсене сăнасси, вӗсен ӗçӗсене, кăмăл-туйăмне (пӗр е темиçе калаври сăнарсене) танлаштарасси. Сăнарсем мӗншӗн, мӗн пирки çапла тунине каласси. Хăйсем тата автор çав пулăмсемпе сăнарсене мӗнле хакланине палăртасси.

Калаври, сăвăри, юмахри сăмахсен пӗлтерӗш уйрăмлăхӗ-сӗмӗсене ăнкарасси, вӗсемпе пуплевре усă курасси. Пулăма, çут çанталăка, çынна витӗмлӗ сăнлакан сăмахсене, вӗсен майлашăвӗсене (танлаштару, эпитет, метафора, фразеологиллӗ сăмах çаврăнăшӗ - терминӗсене асăнмалла мар) хайлавра тупасси, вӗсене ăнланасси.

Сăнар ячӗпе е унăн ятне, калавçăн сăпатне улăштарса каласа парасси; калава малалла тăсасси, сăнарăн малашнехи пурнăçӗпе ӗçӗсем çинчен хушса каласси; сăнлавпа уйлав элеменчӗсем кӗртсе пулни-иртни, курни-илтни çинчен çыхăнуллă калав тăвасси. Халăх сăмахлăхӗ, калав, сăвă, юптару çинчен I-IV классенче илне пӗлӗве çирӗплетсе пӗтӗмлетесси.

Илемлӗ литература стилӗпе ăслăлăх стилӗн уйрăмлăхӗсене асăрхама хăнăхтарасси.

Ачасен сăмах йышне куллен пуянлатса çӗнетесси. Вӗсен пуплевӗн пахалăхне (ăсталăхне, çыхăнулăхне, витӗмлӗхне, уçăмлăхӗпе палăртулăхне) лайăхлатасси. Калаçура та, вуланă чух та шухăш-туйăма интонаци мелӗсемпе (хăвăртлăх улшăнăвӗ, сăсă хулăнăшӗ, тăхтавсем, шухăша палăртакан пусăм, пуплев кӗвви) тӗрӗс палăртасси.

**Вӗренӳ кӗнекине чухласси:** тупмаллипе, пулăшу тата меслет аппарачӗпе (текст хыççăнхи ыйтусемпе ӗçсем, ăнлантарусем, вӗтӗ шрифтпа çырса панисем т.ыт.те) усă курасси. Кӗнекепе хăйсем тӗллӗн ӗçлесси.

**Класс тулашӗнчи вулав**

**Вулав материалӗ.** Кӗçӗн çулхи ачасем валли кăларнă чăваш, вырăс тата ытти тăванла халăхсен, ютри çыравçăсен кӗнекисем. «Тетте» журналпа «Тантăш» хаçатри материалсем.

**Вулав тематики.** Аваллăх çинчен. Ырă пурнăçа ӗмӗтленсе пурăнакан халăхăн кулленхи ӗçӗсем. Ачасен ӗçӗ-хӗлӗ. Чăваш, вырăс тата ытти тăванла халăхсен юмахӗсем. Тăван халăх историйӗпе унăн ывăлӗ-хӗрӗ, ал ӗç тата ăс-хакăл культури çинчен çырнă кӗнекесем. Наукăпа техника темипе çырнă ачасем ăнланмалла статьясем. Темтепӗр курса çӳрени çинчен калакан хайлавсем.

**Ача-пӑча кӗнекипе ӗҫлесси.** Класс тулашӗнчи вулав урокне хатӗрленнӗ май кирлӗ кӗнекене харпӑр хӑй тӗллӗн суйласа вулама, тӗрлӗрен пулӑшу кӗнекипе, хаҫат-журналпа усӑ курма пӗлесси.
Вӗрентӳҫӗ сӗннӗ е харпӑр хӑй тӗллӗн тунӑ планпа усӑ курса мӗн вуланине (унӑн пайӗсене) кӗскен каласа парасси, вуланӑ сӑнар ҫинчен ҫыхӑнуллӑ калав тӑвасси. Вулама сӗннӗ кашни темӑпах 3-5 кӗнеке таран пӗлесси. Пулӑшу кӗнекисемпе (словарь, справочник) усӑ курасси.
«Тантӑш» хаҫатпа «Тетте» журнала тӗллевлӗ вуласси, вӗсемпе урокра тата класс тулашӗнче усӑ курасси.
Кӗнеке мӗн ҫинченнине унӑн хуплашки, титул листа, тупмаллипе ӳкерчӗкӗсем, ум сӑмахӗпе юлашкинчен калани тӑрӑх ӑнкарасси. Кирлӗ кӗнекен е хаҫат-журналти статьян ятне, унӑн авторне кӑтартса тӗрӗс ҫырса илесси. Кӑмӑла каякан кӗнекене харпӑр хӑй тӗллӗнех библиотекӑран илсе вуласси.

## 3. Тематическое планирование. Тематика планӗ

### 1 класс.

### Литература вулавӗ 3-4- мӗш чӗрӗк (17 сехет)

| № | Урок теми | Сехет |
|---|---|---|
| 1. | В.Эктел «Юр», П.Ҫӑлкуҫ «Ытарми хӗл», Л.Смолина «Тӑвайкки». | 1 |
| 2. | В.Эктел «Хӗл Мучи», П.Ҫӑлкуҫ «Тӑвайкки», Е.Кузнец «Ҫеменпе Сивӗ Мучи». | 1 |
| 3. | Л.Салампи «Юр пӗрчи», «Икӗ шартлама». | 1 |
| 4. | Кулленхи сӑвӑ-юрӑ.(стр.15-17) | 1 |
| 5. | Чӗнӳ-йыхрав сӑвви-юрри, хӑвӑрт сӑмах, тупмалли юмахсем. | 1 |
| 6. | Пулмасла халап. Вӗҫсӗр такмак. Шӳт. | 1 |
| 7. | Улӑп халапӗсем. «Тилӗпе Качака таки». | 1 |
| 8. | Л.Сорокина «Пукане», Ю.Силэм «Шак-шак-шак», Р.Сарпи « Ташлать Илемпи». | 1 |
| 9. | Н.Ыдарай «Чӑваш ачи», Ордем Гали «Пысӑк ӗҫ». | 1 |
| 10. | В.Голявкин «Инкек», Р.Сарпи.«ӳкерчӗк». | 1 |
| 11. | А.Ыхра калавӗсем, Н.Карай «Макӑрмарӗ». | 1 |
| 12. | М.Салихов «Усӑллӑ кану», В Осеева «Ырӑ ӗҫ», Н.Рогачёв «Пулӑҫсем». | 1 |
| 13. | И.Яковлев «Хураҫка», А.Ыхра«Шурка»,Е.Чарушин «Томка ишме вӗренни». | 1 |
| 14. | К.Чуковский «Чӗрӗп кулать», Э.Шим «Шапапа калта», «Пакшапа пӑрӑнтӑк». | 1 |
| 15. | Ю.Петров «Путене», И.Малкай « Тӑри», С.Асамат «Йӑва»,<br>О. Печников «Чӗр чунсем те ҫынсем пекех». | 1 |
| 16. | С.Соколинский «Ҫумӑр»,П.Ҫӑлкуҫ «Ҫумӑр умӗн». | 1 |
| 17. | Х.Ҫеменӗ «Ҫуркунне». В.Тарават «Кӑнтӑр ҫӗршывӗнче», А. Ыхра «Ҫурхи илем». | 1 |